**Хирте**

Куçпа виçейми,
Вĕçне çитейми,
Хĕрри-йĕррисĕр
Ыраш хумханать.

Аслă тинĕс пек,
Канлĕх пĕлмест пек,
Ылтăн хӳмĕпе
Хумне хăвалать.

Лăппăн вылятса,
Савса, юратса
Тулли пучаха
Ăш çил чуптăвать.

Çӳлтен, пĕлĕтрен –
Çутă хĕвелтен
Ылтăн тинĕсе
Хĕлхем тăкăнать.

Ана пуçĕнче,
Тымар ăшĕнче
Вăрттăн сасăпа
Путене юрлать.

Ылтăн тинĕс пек
Е сĕм вăрман пек,
Хусканан тырра
Сасси ачашлать.

Пĕт-пĕт, пĕт-пĕлтĕк!
Тутарса илет;
Çутă, ыр ĕмĕт
Хресчене сĕнет.

1920

*Тал-Мăрса, Г. Хирте : [сăвă] / Г. Тал-Мăрса // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 84.*